Михуткина Марина Геннадьевна,

УЛАХ ЛАРНИ

(класс тулашӗнче irttermelli мероприяти сценарийӗ)

Тĕллевĕ: ачасен тавракурăмне ӳстересси; тăван халăхпа унăн культурине хисеплеме вĕрентесси; сăвви-юррине юратма вĕрентесси; чăваш халăхĕн йăли-йĕркисене пурнăçа кĕртсе пырасси.

Кирлĕ хатĕрсем: «Линкка - линкка» ташă, «Çерем пусса вир акрăм», «Çĕрĕ памалла» - вăйăсем, «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», «Урам айкки кăвак çеçке», «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» - юрăсем.

Ертсе пыраканĕ:

-Ырă кун пултăр, хаклă куракансем!

Чăвашсем ĕçлеме питĕ юратнă, унсăр пуçне тата канма та пĕлнĕ. Канас ĕç, паллах, хĕвел ансан, ĕç вĕçленсен пулнă. Аслисем килти ал ĕçĕсене тунă, çамрăксем вара улаха пуçтараннă. Хĕлле, сивĕ вăхăтра пĕр-пĕр кинемей патĕнче пуçтараннă; çу варринче, хĕвел хĕртнĕ вăхăтра, урамра е ял катинче пуçтараннă. Улах ларма хĕрсемпе каччăсем илемлĕ çи-пуç тухăннă, ал ĕçĕсем илнĕ пĕрле. Улахра хĕрсемпе каччăсем пĕр-пĕрне сăнанă, хăйсене валли мăшăр суйланă. Улаха кӳршĕ ял çамрăкĕсем те хăйсен юрри-ташшипе, вăййипе хавхалансах хутшăннă. Çапла çамрăксем ют ялта юрлакан юрăсене, ташăсене, вăйăсене вĕренсе юлнă.

Паян эпир сире чăваш çамрăкĕсем мĕнле улах ларнине кăтартса парăпар.

«Улах ларни» сцена çинче пулса иртет. Сценăна чăваш тĕррисемпе илемлетнĕ, сцена айккинче сурпансем, алшăллисем çакăнса тăраççĕ. Сценăн пĕр енне çатан карта е йывăç лартма юрать.

Арçын ачасен ушкăнĕ «Вăййа тухрĕç çамрăксем» юрра шăрантарса тухать. Пурте чăваш кĕписем тăхăннă, урисене çăпата сырнă е çутă калуш тăхăннă, пилĕкĕсене пиççихи çыхнă.

Йăлтăр - йăлтăр çăлтăрсем
Ялкăшмашкăн тытăнсан.
Эх, тытăнсан – тытăнсан,
Ялкăшмашкăн тытăнсан.

Вăййа тухрĕç çамрăксем
Юрă юхрĕ ян та ян.
Эх, ян та ян, ян та ян.
Юрă юхрĕ ян та ян.

А - а - а – а, а - а – а – а.
Вăййа тухрĕç çамрăксем.
А – а - а – а, а - а – а – а.
Юрă юхрĕ ян та ян.

Тепĕр енчен хĕрсен ушкăнĕ карталанса тăрать те «Урам айкки кăвак çеçке» юрра шăрантарса сцена тепĕр енне тăрать. Хĕрсем те чăвашла тăхăннă, тĕрлĕ тĕслĕ илемлĕ саппунсем çыхнă, пуçĕсене кам тутăр çыхнă, кам тухья тăхăннă, кам масмак çыхнă, урисене çăпата сырнă е çутă калуш тăхăннă.

Урам айкки кăвак çеçке,
Урам айкки кăвак çеçке,
Тайла – тайла татар-и те,
Тайла – тайла татар-и.

Виç кас хĕрсем пĕр пулса,
Виç кас хĕрсем пĕр пулса,
Савна савна выляр-и те,
Савна савна выляр-и?

Çӳл ту çине улăхсан,
Çӳл ту çине улăхсан,
Анас тесе ан калăр та,
Анас тесе ан калăр…

Каçхи вăййа тухсассăн,
Каçхи вăййа тухсассăн.
Кĕрес тесе ан калăр та,
Кĕрес тесе ан калăр.

Çамрăксем саксем çине майлашăнса лараççĕ. Хĕрсем хăйсен алă ĕçĕсене туртса кăлараççĕ, кам алсиш-нуски çыхать, кам тĕрĕ тĕрлет, кам мăйăр, хĕвелçаврăнăш çисе ларать… пурте ĕçлĕ.

Ертсе пыраканĕ:

Атьăр тунсăхласа ларар мар, вăйă выляса илер. Паянхи илемлĕ кун савăнар та, йăл кулар.

<u>Атьăр çĕрĕлле выляр!</u>

- Выляр! Выляр!

Çĕрĕ валеçеççĕ, пĕр çĕррине Петюка тыттараççĕ, тепĕр çĕррине Марука параççĕ. Çĕрĕ камрине пĕлсен ĕç хушаççĕ. Ĕçĕ тĕрлĕрен пулма пултарать: е ташлаттараççĕ, е юрлаттараççĕ.

<u>Тен, ташласа илĕпĕр!</u>

Улахра хут купăссăр нихăçан та ларман. Атя, купăсçă, тăсса яр купăсна! Хĕрсемпе каччăсем ташла пуçлаççĕ, тĕрлĕ шӳтлĕ юрăсем юрлаççĕ:

Чĕнтерлĕ кĕпер айĕнче
Чĕпĕллĕ кăвакал сасси пур.
Çак аслă урам варринче
Сар ачасен сасси пур.

Каçар-и-ха шыв урлă
Шыв сирпĕнсе тăмалла?
Ташлăр халĕ ташшине те
Çын тĕлĕнсе тăмалла!

Ванюк кайнă пасара
Сысна çине утланса.
Сысни кайна ыткăнса
Ванюк юлнă макăрса!

Утнă, утнă малалла
Чупнă, чупнă çырмана
Утмасан та, чупмасан
Пурнăç пымасть малалла

Ташлар-и те савнар-и
Çинçе саслăн юрлар-и
Ташламасан, юрламасан
Хама мăнна хунă пек.

Балалайкăн виçе хĕлĕх
Пĕр хĕлĕхĕ татăлнă
Манăн савни Алюшăн
Малти шăлĕ катăлнă.

Шурă чăлха пур-и сан

Çыхса парам-и сана?
Улталаса çӳренĕшĕн
Çупса ярам-и сана?

Юрлăр - юрлăр темесен те,
Юрлаканĕ пулас çук та!
Ташлăр – ташлăр темесен те,
Ташлаканĕ пулас çук та,
Ма юрлас мар, ташлас мар та,
Савăнăçлă ӳснĕ чух та.

Кăнтăр-кăнтăр Кĕркури
Хĕр вăрлама кайнă тет
Çуни шăтăк пулнă тет
Хĕрĕ тухса ӳкнĕ тет.

Çитĕ пулĕ ташласа, пĕр-пĕрне витлешсе. Атьăр, хĕрсемпе каччăсем, **«Çерем пусса вир акрăм» вăййа** выляса илер!

- Выляр! Выляр!
-Çерем пусса вир акрăм, çерем пусса вир акрăм.
-Эпир ăна, эпир ăна таптатпăр!
-Эпир ăна, эпир ăна таптатпăр!
-Эсир мĕнпе таптатăр! Эсир мĕнпе таптатăр!
-Кĕтӳ кĕртсе, кĕтӳ кĕртсе таптатпăр!
-Кĕтӳ кĕртсе, кĕтӳ кĕртсе таптатпăр!
-Эпир ăна тытатпăр, эпир ăна тытатпăр,
-Эсир мĕнпе, эсир мĕнпе тытатăр?
-Эсир мĕнпе, эсир мĕнпе тытатăр?
-Чĕн йĕвенпе тытатпăр!
-Чĕн йĕвенпе тытатпăр!
-Эпир ăна, эпир ăна илетпĕр!
-Эпир ăна, эпир ăна илетпĕр!
-Эсир мĕнпе илетĕр?
-Эсир мĕнпе илетĕр?
-Çĕр сум парса, çĕр сум парса илетпĕр!
-Çĕр сум парса, çĕр сум парса илетпĕр!
-Çĕр сумăр та кирлĕ мар.
-Çĕр сумăр та кирлĕ мар.
-Сире тата, сире тата мĕн кирлĕ?
-Сире тата, сире тата мĕн кирлĕ?
-Пире кирлĕ сарă хĕр.
-Пире кирлĕ сарă хĕр.
-Акă сире, акă сире сарă хĕр.
-Акă сире, акă сире сарă хĕр.

Вăййа выляса пĕтерсен пурте хăйсен вырăнĕсене вырнаçса лараççĕ. Кашниех хăйĕн алă ĕçне тума пуçлать. Çав вăхăтрах халапсем каласа параççĕ, ялти сăмах-юмаха сӳтсе яваççĕ. Çапла вăхăт иртни те сисĕнмест.

Ертсе пыраканĕ:

Ларса ывăнтăр пуль, тăрăр-ха ура çине, эпир сирĕнпе **«Тӳн-тӳн карчăкла»** выльăпăр.

Пĕр каччăна суйласа илсе куçне тутăрпа çыхаççĕ. Ыттисем айккине тарса шăпăрт тăраççĕ. Тытаканни пырса тытсан çамрăксем улшăнаççĕ.

Ертсе пыраканĕ: -Атьăр, çамрăксем, юрлар, ташлар!

Линкка - линкка авкаланма юман хăма кирлĕ.
Линкка - линкка авкаланма юман хăма кирлĕ.
Халь те юман, халь те юман тата юман кирлĕ.
Халь те юман, халь те юман тата юман кирлĕ.

Йăкăш – йăкăш шукалама яка хăма кирлĕ.
Йăкăш – йăкăш шукалама яка хăма кирлĕ.
Халь те яка, халь те яка тата яка кирлĕ.
Халь те яка, халь те яка тата яка кирлĕ.

Ик аллăма сулкалама кĕмĕл çĕрĕ кирлĕ.
Ик аллăма сулкалама кĕмĕл çĕрĕ кирлĕ.
Халь те кĕмĕл, халь те кĕмĕл тата кĕмĕл кирлĕ.
Халь те кĕмĕл, халь те кĕмĕл тата кĕмĕл кирлĕ.

Чуп – чуп чуптума чипер ача кирлĕ.
Чуп – чуп чуптума чипер ача кирлĕ.
Халь те чипер, халь те чипер тата чипер кирлĕ.
Халь те чипер, халь те чипер тата чипер кирлĕ.

Çапла майпа çамрăксем уй-хир ĕçĕсенчен каннă, анчах та ал ĕçĕ çинчен манман.

Ваттисем каланă тăрăх, хăшĕсем, маттуррисем, улах ларнă вăхăтрах, пĕр каçра, мăшăр нуски çыхнисем те пулнă. Яш каччăсем вара ытларах чухне çăпата тунă.

Çамрăксем нихăçан та ашшĕ-амăшĕ сăмахĕнчен иртмен. Улаха кайма та вĕсем килти ĕçсене туса пĕтерсен тин, ашшĕ-амăшĕ ирĕк парсан кăна кайма пултарнă. Хĕллехи вăхăтра, пĕр-пĕр кинеми патĕнче улах ирттерсен, кинемеее ялан тав сăмахĕ каланă, кучченеçпе хăналанă. Эпир те паян пирĕн куракансене тав сăмахĕ калатпăр.

Чăвашăн кашни вăхăчĕ виçеллĕ пулнă, вăхăтпа пĕлсе усă курнă.

Пирĕн те, хĕрсемпе каччăсем вăхатпа виçеллĕ усă курма вĕренесчĕ. Атьăр-ха юлашки çавра юрă юрлар та, килсене саланар:

Çĕмĕрт çеçки çурăлсан та,
Çĕмĕрт çеçки çурăлсан,
Килет вăрман илемĕ.
Килет вăрман илемĕ.
Эпир вăййа тухсассăн та,
Эпир вăййа тухсассăн,
Килет вăйă илемĕ,
Килет вăйă илемĕ.
Çĕмĕрт çеçки тăкăнсан та,
Çĕмĕрт çеçки тăкăнсан,
Каять вăрман илемĕ,
Каять вăрман илемĕ.
Эпир вăйăран кайсассăн та,
Эпир вăйăран кайсассăн.
Каять урам илемĕ.

Чăвашăн йăли-йĕркисене манас марччĕ, маллалла та çакăн йышши уяв саманчĕсем ирттерсех тăрасчĕ.